Выльăх пăхакансен пĕрлехи кунĕнчен

21-мĕш ĕмĕр, компьютеризаци, нацпроект, анчах...

"Кун йĕркинчи çĕнĕлĕхсем пирĕншĕн мар пулас çав", – терĕç ĕçрен уйрăлмасăр тислĕк шывĕ пухăнмалли çăлтан витрепе шыв ăсса илсе ăна урамра тислĕк шывне турттарма хатĕрленĕ шăнăçпа тăракан лаша çуни патне йăтакан, анчах малтуртăмлă шухăш-кăмăла çухатман ферма ĕçченĕсем пире курсан аванмарланса. Сысна амисем тăракан витере пĕрисем "çăлтан" витрепе тислĕк шывĕ кăлараççĕ те теприсем иртнĕ ĕмĕрте тислĕк кăларма хунă валакпа унта тислĕк шывне кĕреçепе хăваласçĕ. 11 сехет çывхарать, анчах сысна пăхакансен ĕç кунĕ вĕçленмен. Мĕн калас ку тĕлĕнмелле ӳкерчĕк пирки? Хуравĕ: Мăн Токшикри "Агро-урожай" хупă акционерлă обществăн сысна ферминче ĕçе чунĕпе парăннă, çемьене, ача-пăчана пăрахса кайма тăхтакан хĕрарăмсем йывăрлăхсем умĕнче алă усмасăр çĕршыври çĕнĕлĕхсем хăçан та пулсан хăйсем патне те çитессе шанса ĕçлеççĕ. Шанаççĕ те хăйсен пурнăçĕнче çак шанчăк хĕвел тухас пек пурнăçа килессе кĕтеççĕ. Хăçанччен пырĕши "хĕвелсĕр кун" тата кĕтсех илейĕç-ши вĕсем ырă самантсене? Сарай тăрăх утнă май темшĕн чĕререн иккĕленӳ туйăмĕ каймасть. Икĕ эрне каялла пĕрремĕш сивĕсем тата юр çунисем тăван тавралăха хĕл сăнĕ кĕртенçи турĕç пулсан та Мăнтокшиксен сыснисем сарайĕнчи шит тарăнăш тислĕкрен ăшă та типĕ вырăна тухайманччĕха. Вĕсем кĕтессенчи тĕмеллĕ вырăнсенче хăйсем валли "çывăрмалли пӳлĕмсем" майлаштарнă. Ку тĕмесем тислĕк океанĕнчи типĕ утравсем пек курăнатчĕç. Вăт çапла вăл сысна ферминчи географи.

Ĕç кăтартăвĕсене пăхсан ку ӳкерчĕк кунта ĕмĕрлĕх пулманни те сисĕнет, çапах куçа курăннине айккине илсе пăрахма та хĕнрех.

Вунă çула яхăн каялла Турайсемпе пĕр колхозра пулнă Мăнтокшиксем хăйсем ӳйрăммăн хуçалăхпа ĕçлеме кăмăл турĕç. Шутланă – тунă: районти ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинче "Динамо" хăйĕн кăтартăвĕсене кăтартма пуçларĕ. Анчах рынок экономикин вăйлă та шелсĕр авăрĕ çамрăк хуçалăха çирĕп ура çине тăратсах тăратмарĕ. Ертӳçĕсем ылмашăнчĕç, харпăрлăх форми улшăнчĕ – хуçалăх пĕрех малалла каяймарĕ. Кăçал авă çĕр ĕçченĕ сĕт сутса укçа-тенкĕ сахал мар турĕ, анчах Мăнтокшиксен пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ сумалли ĕне кĕтĕвĕ те çук.

"Агро-урожай" хупă акционерлă обществăра (унччен-хи "Динамо") чӳк уйăхĕ пуçланнă тĕле пурĕ 774 пуç сысна, вăл шутран 98 ама, 10 аça, самăртмалли ушкăнри сыснасем 145 пуç, 346 пуç çура пулнă. Çулталăк пуçланнăранпа ферма пĕтĕмпе 46,7 тонна аш-какай туса илнĕ (пĕлтĕрхи кăтартуран 28 тонна нумайрах). Усă куракан 100 гектар çĕр пуçне пăхас пулсан, ку кăтарту сумлăрах та курăнать: 77,3 центнер (пĕлтĕрхи кăтартуран 50 центнера яхăн ытларах). Кăçалхи январь-октябрь уйăхĕсенче сысна пăхакансем 2707 çура илме пултарни Мăн Токшикра ĕç çине сивĕлле пăхманни çинчен калать. Çав вăхăтрах самăртма хупнă сыснасем пылчăкра тăрса талăксерен çулталăк каяллахинчен вăтамран 182 грамм сахалрах ӳт хушни (322 грамм) хуçалăхăн малтуртăмлă утăмне кăтартмастех. Кам айăплă кунта? Хуравĕ – Мăн Токшикра.

– Тавах фермăра ĕçлекенсене. Кунта эпир пурĕ 9 сын ĕçлетпĕр. Вăтам ĕç укçи 3 пин тенкĕне ларать. Ĕçлекенсем ытларах ĕçе алăпа тăваççĕ пулсан та сарайсене тирпейлĕ тытса тăраççĕ. Галина Григорьева, Валентина Валько, Альбина Матвеева, Елена Нысанбекова сысна пăхакансемпе Валерий Крылов выльăх пăхакан т. ыт. те тăрăшнипе выльăхчĕрлĕх отраслĕ ура çинче тăрать-ха. Анчах хуçасем лару-тăрăва улăштарасси-пе конкретлă ĕçсем тумасан ыррине кĕтме хĕн, – терĕ ферма заведующийĕ Валентина Ивановна Порфирьева.

Ферма ертӳçин сăмахĕсем çумне çакна çеç хушса калас килет. Кăçал хуçалăх пĕр пĕрчĕ тырă та акманнине кура хуçалăхăн пĕлтĕрхи улăмсăр пуçне (вăл та ферма картишĕнче 30-40 рулонтан мала марччĕ) улăмĕ те, утти те çук. Вăт çапла кĕтĕмĕр черетлĕ хĕле. Çава тухайăпăр-ши? Ку ыйту тепĕр çуллаччен уçă юлать.

Çакнашкал ыйту çуратрĕ эпир асăннă хуçалăхра обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсемпе çак отрасльте вăй хуракансене халалласа унти ĕç-пуçпа паллашма район шайĕнче ирттернĕ пĕрлехи кун.

Пысăках мар пулин те, экономика хăватне çухатнă Мăнтокшиксем те район аталанăвне хăйне евĕр тӳпе хываççĕ. Çакна валли тата ăна сумлăрах аталантарма майсем çителĕклĕ пек курăнать, анчах вырăна çитсен...

Çитнĕ-çитмен пурнăçпа пулсан та, ферма коллективĕ ĕçлет, хăйĕнчен мĕн килнине пурнăçлать.

– Хуçалăх ертӳçисем çаврăнăçуллăх тупса апатпа тивĕçтерсен, эпир продукци илессине чакарсах ямăпăр. Пирĕн кăмăлĕсем те малалла ĕçлессишĕнех. Апат çук тесе ферма ан хупăнтăр кăна. Тата пурăна-киле тислĕк кăларассипе ĕç йĕркеленсе кайтăрччĕ, – мал ĕмĕтпе калаçаççĕ ферма ĕçченĕсем.

"Фермăра апат пулсан тата сарайсенче выльăх çителĕклĕ тăрсан, ĕçсен пĕр пайне те пулин механизацилесен, продукци илесси – пирĕн ĕç", – теççĕ Галина Григорьева, Валентина Валько, Альбина Матвеева, Валентина Порфирьева ĕçченсемпе Валерий Крылов возчик.

С. НИКОЛАЕВ,
патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ;
А.БЕЛОВ,
район хăçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.

Сăмах – район пуçлăхне

Йăлтах хамăртан, хамăр тунă утăмсенчен килет

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Урамра ниçта пĕр çӳпĕ те выртмасть, çавăнпа та пирĕн те турттăнмалла ку енĕпе. Кашни çемьен килти картине юсаса йĕркене кĕртмелле, анкарти-пахчасене тирпейлемелле. Хамăр пурăнакан урамсене те хамăрăнах, унта пурăнакансен, тирпей-илем кĕртмелле, çĕр ĕç культурине çĕклессипе те тивĕçлĕ утăмсем тумалла пирĕн. Ял хуçалăх культури акмасăр хăварнă пĕр лаптăк та пулмалла мар. Улăх-çарансене тирпейлемелле.

Ку вăл Республика кунне хатĕрленсе ирттермелли кăтартуллă ĕç кăна пулмалла мар. Кулленхи пурнăç йĕрки пулмалла. Хамăрăн культура шайне хăпартасси пирки тимлемелле пирĕн. Республика кунне пирĕн районта ирттерни вара пире çак ĕçсене васкарах тума, хамăра хамăр хисеплеме хистет. Хăнасем умĕнче те пите хĕретмелле ан пултăрччĕ.

– Юрий Александрович, Республика кунне кĕтсе, район паян нумай пысăк ыйтусене татса парассипе ĕçлет. Вĕсем çинче чарăнни вулакансемшĕн те кăсăклă пулĕ.

– Паян районти ялсем патне асфальт çул тăвасси малалла пырать. Вăл пирĕн 34 ял патне пулман пулсан, кăçал пурĕ 22 ял патне туса пĕтеретпĕр çула. Çакна валли федераци тата республика бюджечĕсенчен кăçал 263,6 миллион тенкĕ укçа уйăрнă. Ку вăл çак тĕллевпе тата килмелли укçа-тенкĕне шутламасăр. Пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлесен, ĕç пулать. Акă мĕн çинчен калать çак тĕслĕх.

Ялсене газ кĕртнине аса илер-ха. Никам та ĕненесшĕнех марччĕ кĕске вăхăтра çак ĕçе туса пĕтерессе. Паян кашни ялти кашни килте çак ырлăх. Çавăн чухлĕ ял патне çулталăк хушшинче çул тăвасса та малтан никам та шутламан. Хăвăрах куратăр, ку ĕç çитес çул вĕçленет.

Ялсем патне çул туса пĕтерсен, тепĕр пысăк ĕç пуçланмалла: ялсем хушшинчи çулсене тума тытăнмалла. Ку тĕлĕшпе ятарлă программа ĕçлеме пуçламалла. Район центрнех илер-ха, тĕслĕхрен. Унти 21 урамран 7-шĕн витĕр çеç йĕркеллĕ çул пур. Тепĕр 14 урамĕнчен хăшĕн-пĕрин патне Республика кунĕ тĕлнех тума шутларăмăр ăна. Çавăн пекех Çĕньял Муркашра та çитес çул çава тухнă çĕре йĕркеллĕ çул пулмалла.

Республика шайĕнчи çулсем те ялăхсах пыраççĕ. Ку енĕпе те пирĕн тăрăшсах ĕçлемелле пулать. Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск (5,465 км), Волга – Мăн Сĕнтĕр – Шашкар пристанĕ (9,7 км), Муркаш – Турай – Сура (6,83км) çула юсама палăртрăмăр.

Илер тата Муркаш варринче вырнаçнă пулас физкультурăпа спорт комплексне. Вун пилĕк çул пушă ларнă çак çурт та кĕске хушăрах хăйĕн сăн-сăпатне улăштарчĕ. Республика кунĕнче хăйĕн алăкĕсене яриех уçĕ вăл. Çакна валли республикăпа район бюджетĕнчен пĕтĕмпе 100 миллион тенке яхăн укçа уйăрнă.

– Халăха хумхантаракан ытти ыйтусемпе мĕнле татăклă мерăсем йышăннă?

– Районта пурăнакансене паян шыв ыйтăвĕ канăç памасть. Ку тĕлĕшпе те лав вырăнтан тапранасса шанатпăр. Ялсенче ку ыйтăва татса парассипе проектсем хатĕрлесси малалла пырать. Тĕрлĕ суйлавсенче пысăк активлăх кăтартакан кăнтăрти районсенче ку ĕçе вĕçлесен, пирĕн патра тытăнасса республика Президенчĕ шантарать.

Районта пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕсене турăмăр. Иртнĕ юн кун Юнкăра та çăлчĕ çакнашкал тепĕр уйрăм. Ялсенчи пĕр фельдшерпа акушер пунктне те хупман. Вĕсен пурин те лицензи пур. Паян пире районти тĕп больницăн поликлиники тивĕçтермест. Ăна çĕнĕрен тума палăртатпăр. Проектне тума пуçланă ĕнтĕ.

Тепĕр палăртнă пысăк ĕç вăл – районти Культура çуртне реконструкцилесси. Паян унта 200 яхăн çын вырнаçать пулсан, ăна тĕплĕн юсаса çĕнетнĕ хыççăн зал 300 çын вырнаçмалăх пулĕ. Фойе те, библиотека та палăрмаллах пысăкланĕ. Проектне хатĕрлеме пуçланă çакна валли.

Районти кашни шкулта Интернета тухаççĕ. Вĕрентӳ учрежденийĕсен пурлăхпа техника базине татах та лайăхлатассипе ĕçлемелле пирĕн. Тĕслĕхлĕ библитотекăсем турăмăр. Халĕ вара Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн ялти клубсемпе Культура çуртĕсене тĕслĕхлĕ туса хурассипе пысăк ĕçсем туса ирттермелле.

Паян районта пурăнакансем аякка кайса ĕçленине те йĕркеллĕ пулăм теме çук. Ачасем нумай вăхăта ашшĕсĕр юлаççĕ, çемьесен çирĕплĕхĕ çине те япăх витĕм кӳрет çакă. Ĕç вырăнĕсем вара районтах пур. Строительство ĕçĕнче çынсем çитмеççĕ. Çавна пула урăх районсенчен илсе килме тивет. Халĕ ак çулсем тунă çĕрте те Куславкка рабочийĕсем йышлă ĕçлеççĕ. Ĕç укçи вара Мускавра тӳленинчен кая мар. "Сеспель" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра (кунта уяв кунĕ тĕлне тата тепĕр пысăк производство комплексĕ хута каймалла), Муркашри кирпĕч заводĕнче те паян япăх мар ĕçлесе илеççĕ. Хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацине те строительсем кирлĕ. Çавăнпа та вырăнтах йĕркеленсе ĕçлесен хамăршăн та, çемьешĕн те лайăх пулĕ.

– Калаçу вĕçленсе пынă май, Юрий Александрович, тав тăватăп Сире уçăмлă хуравсемшĕн. Хаçат вулакансене мĕн хушса каланă пулăттăр?

– Ĕçсем нумай. Ӳркенмелле мар çеç. Районта пурăнакан кашни çын малашне те район аталанăвĕшĕн тăрăшасса шанатăп. Пĕрле, пĕр тĕллевпе ĕçлесен, Республика кунне те тивĕçлĕ шайра ирттерĕпĕр, хамăрăн ытти проблемăсене те татса парăпăр. Ахальтен каламаççĕ вĕт чăвашсем пĕччен хулă хуçалать тесе. Шăпăр вара, ăна мĕнле авсан та, хуçалмасть. Пĕрле пулмалла пирĕн. Уява пирĕн районта ирттерме йышăнни пире тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тума хистет, хамăр тăрăшсан, пире республикăна ертсе пыракансем те хаваспах пулăшасси пирки калать. Çавăнпа та тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем туса, тĕрĕс утăмсем тăвасчĕ. Паян та, ыран та, ĕмĕр тăршшĕпех.

Л. ПАВЛОВА каласнă.

Суйлава каякансене пĕлме

Вăхăтлăх удостоверени илмелле

Çитес вырсарни кун – РФ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ. Суйлава пурин те паспортпа каймалла. Миграци службин Чăваш Республикинчи федераци управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн ертӳçи З. Сорокина пĕлтернĕ тăрăх, камăн паспорт çук, вĕсене вăхăтлăх удостоверени кирлĕ пулать. Ку документа тума пирĕн пата килмелле. Сăн ӳкерчĕк тата çурални çинчен калакан свидетельство кирлĕ пулать. Миграци службин Чăваш Республикинчи федераци управленийĕн пирĕн районти территори пункчĕ вырсарни кун – суйлав кунĕнче – 8 сехетрен пуçласа 20 сехетченех ĕçлет. Суйлава каймасăр ан юлăр. Паспорт çук пулсан, вăхăтлăх удостоверени тума хапăл тусах кĕтеççĕ.

ОАО «Россельхозбанк»

Генеральная лицензия ЦБ РФ № 3349 от 25 июля 2007

Банк с 100% участием государства

Вклады застрахованы

Система Страхования Вкладов

Дополнительный офис в с. Моргауши Чувашского регионального филиала ОАО «Россельхозбанк» принимает вклады в рублях от лиц, получающих пенсии

Реклама

	«Пенсионный»	«Пенсионный Люкс»
Срок хранения вклада	1 год	180 дней, 1 год
Минимальный размер первоначального взноса во вклад	500 рублей	10000 рублей
Процентная ставка по вкладу	**8,5 % годовых**	**180 дней – 10 % годовых** **1 год – 11,25 % годовых**
Выплата процентов	Проценты ежемесячно причисляются к сумме вклада	Проценты выплачиваются ежемесячно
Расходные операции	Совершаются в наличной и безналичной форме до размера неснижаемого остатка – 500 рублей	Не предусмотрены
Процентная ставка при досрочном востребовании всей суммы вклада или ее части	Процентная ставка не уменьшается и составит 8,5 % годовых	1 % годовых
Дополнительные взносы	Принимаются в любых суммах. Периодичность взносов не ограничена.	

Счета по учету вкладов «Пенсионный» и «Пенсионный Люкс» могут быть открыты только самим вкладчиком-пенсионером при предъявлении им, помимо других необходимых документов, пенсионного удостоверения или документов о назначении ежемесячного пожизненного содержания. Предусмотрена автоматическая пролонгация по окончании срока хранения вклада на тот же срок на условиях и под процентную ставку, действующих в Банке по данному виду вклада на день, следующий за датой окончания предыдущего срока хранения. Первоначальные и дополнительные взносы денежных средств во вклад могут осуществляться как наличными денежными средствами, так и путем безналичного зачисления денежных средств. За совершение операций по вкладам Банком взимается комиссионное вознаграждение в соответствии с Тарифами Банка.Подробно ознакомиться с условиями договоров о вкладах и Тарифами Банка Вы можете на сайте Банка: http//www/rshb.ru., в Чувашском региональном филиале ОАО «Россельхозбанк» по телефону 42-19-89 и его дополнительном офисе по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 5. Телефон: 2-15-32.

- Это предложение действует до объявления Банком принятого Правлением Банка решения о прекращении приема денежных средств во вклад данного вида и/ или изменений его условий, в том числе размера процентной ставки.

Юбилей

Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, аннене, асаннене – Торинкассинче пурăнакан **Нина Филипповна СКВОРЦОВАНА** декабрĕн 3-мĕшĕнче 70 çулултарнă ятпа чунтан тухакан чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Сана эпир ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр, ватлăху канлĕ пултăр. Ачусемпе, мăнукусемпе мĕн ватăлса виличченех савăнса пурăнмалла пултăр. Пирĕншĕн эсĕ яланах ырă кăмăллă ĕçчен пулнă, малалла та çавнашкал пуласса шанатпăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, икĕ кинĕ, икĕ мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем тата çывăх тăванĕсемпе кӳршисем.

Юратнă мăшăрăма, аннемĕре, кукамая – Мăн Хурăçка ялĕнче пурăнакан **Елена Викторовна САЛДЫРКИНАНА** сумлă юбилейпа ăшшăн саламлатпăр.

Мĕн тери ĕçчен те правур эсĕ. 20 çул фермăра вăй хутăн. Халĕ тепĕр 20 çул ача садĕнче ĕçлетĕн. Тавах сана ытарайми ырă кăмăлушăн, эпир пĕчĕк чухне е чирленĕ чух куç хупмасăр ирттернĕ каçсемшĕн, ĕçпе куштăрканă аллусемпе пире лăпканăшăн, ачашланăшăн, юратнăшăн, çын тунăшăн.

Сывлăху сан çирĕп, пурăнас кун-çулу вăрăм та телейлĕ пултăр. Нимле хуйхă-суйхă сан çывăхна ан пытăр. Кашни çĕнĕ кун ырă хыпар илсе килтĕр. Ачусемпе мăнукусен пурнăçĕ телейлĕ пултăр. Çакăнтан хакли çук вĕт саншăн, аннемĕр. Эпир сана юрататпăр, сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр, çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сунатпăр.

Мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Ахмане ялĕнче пурăнакан **Тамара Николаевна ТАРАСОВАНА** 55 çулхи юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр.

Çак паллă кун ячĕпе саламласа сана яланах çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей сунатпăр. Ачусемпе, мăнуксемпе, çывăх тăванусемпе тата тус-юлташусемпе санăн яланах савăнса тăмалла пултăр.

Саламлаканĕсем: юратакан мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем тата тус-юлташĕсем.